# Чинопоследования литургий святаго Василия Великого и Григория Двоеслова на чувашском языке

**Москва**
**«Книга по Требованию»**

УДК 93
ББК 63.3
Ч-63

Ч-63 Чинопоследования литургий святаго Василия Великого и Григория Двоеслова на чувашском языке / – М.: Книга по Требованию, 2014. – 80 с.

**ISBN 978-5-458-12754-7**

**ISBN 978-5-458-12754-7**

© Издание на русском языке, оформление
«YOYO Media», 2014
© Издание на русском языке, оцифровка,
«Книга по Требованию», 2014

Эта книга является репринтом оригинала, который мы создали специально для Вас, используя запатентованные технологии производства репринтных книг и печати по требованию.

Сначала мы отсканировали каждую страницу оригинала этой редкой книги на профессиональном оборудовании. Затем с помощью специально разработанных программ мы произвели очистку изображения от пятен, клякс, перегибов и попытались отбелить и выровнять каждую страницу книги. К сожалению, некоторые страницы нельзя вернуть в изначальное состояние, и если их было трудно читать в оригинале, то даже при цифровой реставрации их невозможно улучшить.

Разумеется, автоматизированная программная обработка репринтных книг – не самое лучшее решение для восстановления текста в его первозданном виде, однако, наша цель – вернуть читателю точную копию книги, которой может быть несколько веков.

Поэтому мы предупреждаем о возможных погрешностях восстановленного репринтного издания. В издании могут отсутствовать одна или несколько страниц текста, могут встретиться невыводимые пятна и кляксы, надписи на полях или подчеркивания в тексте, нечитаемые фрагменты текста или загибы страниц. Покупать или не покупать подобные издания – решать Вам, мы же делаем все возможное, чтобы редкие и ценные книги, еще недавно утраченные и несправедливо забытые, вновь стали доступными для всех читателей.

Серия Книжный Ренессанс
www.samizday.ru/reprint

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах.

Ей Турă, Хăвăн ырăлăхупа пирĕн хута кĕр, çăл, çырлах, пăхса усра пире.

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах.

Хамăрăн святой, таса, ырăлăхлă, мухтавлă, аслă, Турра çуратнă, ĕмĕр Хĕр Маріапа мĕн пур святой çынсене асăнса, хамăра хамăр, пĕр пĕрĕмĕре, пĕтĕм пурăнăçăмăра Христос Турă аллине парар.

*Йурлакан*: Сана, ей Турă.

*Священник хăй ăшĕнтье çак малтанхи антифон кĕллине вулат*:

Ей Туррăмăр, Туррăмăр, Сан хăватна калама çук, Сан мухтавна пĕлме çук, Сан ырăлăху хисепсĕр, Есĕ стеме йуратнине каласа пĕлтерме çук; ей Патша Турă, Есĕ Хăвăн ырă кăмăлу тăрăх пирĕн çийе, çак таса ҫиркӳ çине пăх; пире те, пирĕнпе пĕрле кĕл-тăвакансене те Хăвăн пысăк, нумай ырăлăхна кăтарт.

*Хыта сасăпа*: Сана Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, тĕрлĕ мухтама, хисеплеме, пуççапма тивĕçлĕ, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

*Йурлакан*: Амин.

*Вара йурлакансем малтанхи антифона йурлаççĕ*:

Ей ҫунăм, Турра мухта: *пĕтетьтьенех йĕркипе*.

*Священник алтартс хăй ăшĕнтье кĕл-тунă тьух, діакон алтар тулашĕнтье ектеніа калат*:

*Діакон çук пулсан, священник кĕл-туса возглас каласан, ектеніа калат*:

Ырă кăмăлпа Турра тата кĕл-тăвар.

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах.

Ей Турă, Хăвăн ырăлăхупа пирĕн хута кĕр, çăл, çырлах, пăхса усра пире.

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах.

Хамăрăн святой, таса, ырăлăхлă, мухтавлă, аслă, Турра çуратнă, ĕмĕр Хĕр Маріапа мĕн пур святой

çынсене асăнса, хамăра хамăр, пĕр пĕрĕмĕре, пĕтĕм пурăнăçăмăра Христос Турă аллине парар.

*Йурлакан*: Сана, ей Турă.

*Священник*: Патшалăх та, хăватлăх та, аслăлăх та Санăн: Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

*Йурлакан*: Амин.

*Унтан çак иккĕмеш антифона йурлаççĕ*:

Ей ђунăм, Турра мухта; хам пурăннă ђух Турра мухтам: *пĕтетђен*.

Мухтав Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

Ей Туррăн пĕртен пĕр çуралнă Ывăлĕ, Турă Сăмахĕ, Христос Туррăмăр, Есĕ вилĕмсĕрскер, пире çăласшăн таса Турă Амăшĕ ĕмĕр Хĕр Маріаран ўтленсе ђăн çын пулнă, хĕрес çинђе вилсе вилĕме çĕнтернĕ. Есĕ Святой Виç-Ипостаçлĕ Турăран пĕри, Сана Атте Турăпа, Святой Сывлăш Турăпа пĕрех хисеплетпĕр: Есĕ пире çăл.

*Çакна йурланăђух священник çак иккĕмĕш антифон кĕллине вулатŏ*:

Ей Туррăмăр, Туррăмăр, етеммўсене çăл, Хăвăн халăхна пилле, Хăна ĕненекенсене тĕрĕс усра, Хăвăн çуртна илемлетме йуратакансене тасат; вĕсене пурне те Хăвăн аслă хăватупа мухтава кăлар, пире те Ху çине шанса тăракансене ан пăрах.

*Діакон калатŏ.*

Ырă кăмăлпа Турра тата кĕл-тăвар.

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах.

Ей Турă, Хăвăн ырăлăхупа пирĕн хута кĕр, çăл, çырлах, пăхса усра пире.

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах.

Хамăрăн святой, таса, ырăлăхлă, мухтавлă, аслă, Турра çуратнă, ĕмĕр Хĕр Маріапа мĕн пур святой

çынсене асăнса, хамăра хамăр, пĕр пĕрĕмĕре, пĕтĕм пурăнăçăмăра Христос Турă аллине парар.

*Йурлакан*: Сана, ей Турă.

*Священник*: Есĕ етеме савакан ырă Турă, Сана аслăласа мухтатпăр: Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

*Йурлакан*: Амин.

*Вара малалла виççĕмĕш антифона йурлаççĕ*:

Ей Турă, патшалăхна кĕрсен, патшалăхăнта асна ил пире.

Мĕскĕн кăмăллисем телейлĕ: вĕсене çўлти патшалăх пулĕ.

Йĕрекенсем телейлĕ: вĕсем савăнĕç.

Йăваш кăмăллисем телейлĕ: вĕсене çĕр тивĕ.

Тўрĕтĕн выçăхса çунакансем телейлĕ: вĕсем тăранĕç.

Çынна хĕрхенекенсем телейлĕ: вĕсене хăйсене хĕрхенў пулĕ.

Таса ҫĕреллисем телейлĕ: вĕсем Турра курĕç.

Килĕштерў кўрекенсем телейлĕ: вĕсене Турă ывăлĕсем тесе калĕç.

Тўрĕшĕн хĕсĕрленине тўсекенсем телейлĕ: вĕсене çўлти патшалăх пулĕ.

Сире ман пирки хурласан, хĕсĕрлесен, тĕрлĕ усал сăмахпа вырăнсăр хăртсассăн, есир телейлĕ пулăр.

Савăнăр, хĕпĕртенĕр, пĕлĕт çинҫе сире пысăк саван пулĕ.

*Кăна йурлана тьух діакон алтаре кĕрсе кайат, священник çак кĕлле вулат*:

Ей Турă, Есĕ пире çакăн пек пĕрле пухăнса, пĕр канашпа кĕл-тума панă; иккĕн, йе виççĕн пухăнса Сан йатупа ыйтсассăн, Есĕ мĕн ыйтнине пама пулнă: халĕ те çак Хăвăн ҫурусем тархасланине Ху илтсе усăлă ту, пире ку тĕнҫере Хăвăн ҫăнлăхна пĕлтер, леш тĕнҫере ĕмĕрлĕх пурăнăçа кўрт.

*Ку телте вара Патша алăкне уçаççĕ. Виççĕмĕш антифонăн* Мухтав[1] *патне çитсен, діаконпа священник престол умĕнче виç хут пуççапаççĕ. Унтан священник Евангеліе илсе діакона парать, вара икĕш те сылтăм йенчен престол тавра кайса çур-çĕр йенчи алăкран тухаççĕ, вĕсен умĕнчен çурта йатса пыраççĕ: Патша алăкĕ умĕнче діакон калать:*

Турра кĕл-тăвар.

*Йурлакан:* Ей Турă, çырлах.

*Священник вăл вахатра хăй ăшĕнче çак кĕлле вулать*

Ей пурне те тытса тăракан Туррăмăр, Есĕ Хăвăн аслăлăхна мухтаса тăма çӳлте ангел ушкăнĕсене, ангелсен, архангелсен -çарĕсене пултарнă: çак епир кĕрес алăкпа таса ангелусене кӳрт, вĕсем те пирĕнпе пĕрле Сан ырăлăхна мухтаччăр.

Сана Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, тĕрлĕ мухтама, хисепleме, пуççампа тивĕçлĕ, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

*Священник çак кĕлле вуласа пĕтерсен, діакон орарне сылтăм аллин виç пӳрнипе тытса, малалла кăтартса калать:* Таса алăка пилле, атте, *тет.*

*Священник пиллесе калать:* Ей Турă, Санăн тасисем кĕрекен алăк йаланах пиллĕхлĕ, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, *тет.*

*Унтан вара священник сăхсахса Евангеліене чуптăвать, йурлакансем йурласа пĕтерсессĕн, діакон Патша алăкĕ варрине тăрса Евангеліене хĕрес туса çапла калать:*

Аслăлăх. Тăнласа тăрăр.

*Йурлакан:* Килĕр, Христоса ӳксе пуççапар, ей вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Тура Ывăлĕ, çăл пире, епир Сана мухтаса йурлатпăр: аллилуіа.

*Çакна йурланă хух, діаконпа священник алтаре; кĕрсе кайççĕ: Евангелійне діакон престол çине хурать йурлакансем тропар йурлаççĕ. Йурласа пĕтерсен діакон орарне тытса пуçне тайса калать:*

Пилле, атте; Виç-Святой йуррийĕн вăхăҫĕ çитрĕ.

*Священник ăна пиллесе калать:*

Ей Туррăмăр, Есĕ Святой, Сана аслăласа мухтатпăр: Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та.

*Вара діакон алтартен тухать те, орарне Христос сăнĕ çине кăтартса калать:*

Ей Турă, ҫăн тĕне тытса тăракансене çăл, пирĕн кĕллмĕре илт.

*Йурлакансем те çавнах йурлаççĕ.*

*Унтан діакон халăх йеннелле пахса аллине çавăрса хыта сасăпа калать:*

Емĕр ĕмĕрех.

*Йурлакан:* Амин. Святой Турă, Святой Хăватлă, Святой Вилĕмсĕр, çырлах пире. *3 хут.*

*Çав вăхăтра священник Виç-Святой кĕллине вулать:*

Ей Святой Турă, Есĕ святойсен хушшинҫе тăратăн. Сана серафимсем виç-святойлă йурă йурласа тăраççĕ, херувимсем мухтаса аслăлаççе, çÿлти пур тĕрлĕ ангелсем пуççапса тăраççĕ: Есĕ пурне те çук çĕртенех пур тунă, Есĕ етеме Ху тĕслĕ, Ху йевĕрлĕ пултарнă, ăна Хăвăн тивлетÿсемпе илемлетнĕ; Есĕ ыйтакана ăслăлăхпа тăнлăх паратăн, çылăха кĕрекене те пăрахмастăн, ăна çылăхран ÿкĕнсе çăлăнма май паратăн; Есĕ пире мĕскĕн, йурăхсăр ҫурусене çак сехетре Хăвăн аслă, таса парне вырăнĕ умне тăрса, Хăна тивĕçлипе аслăласа пуççампа патăн: ей Патша Турă, ĕнтĕ епир çылăхлă ҫĕлхе-çăварпа виç-святойлă йурă йурланине Ху хапăл ил, Хăвăн ырăлăхна кăтарт пире; епир ирĕклĕ, ирĕксĕр çылăха кĕнине пурне те

каçар, ђунăмăрсене, ӳтĕмĕрсене тасат, таса Турă Амăшĕ кĕллипе, ĕмĕртенпех Хăна йурăхлă пулнă святой çынсенĕн кĕллипе пурăнан кун-çулăмăрта Хăна таса кăмăлпа кĕл-туса пурăнма пар пире.

*Хыта сасăпа калать:*

Ей Туррăмăр, Есĕ Святой, Сана аслăласа мухтатпăр: Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

*Çак кĕлле вуласа пĕтерсен, священникпе діакон хайсем те виç-святой йуррине виç хут вуласа, виç хут престол умент̆е пуççапаççĕ. Унтан діакон священнике калать:*

Кайма хуш, атте, *тет те, мала престол хыçне çӳлĕ выран тийекен çĕре кайать, священник ун хыççăн çапла класа утать:*

Турă йађĕпе килекен мухтавлă.

*Діакон:* Çӳлĕ вырăна пилле, атте.

*Священник:* Ей херувимсем çинђе ларакан Турă, Есĕ Хăвăн патшалăхăнти аслă вырăн çинђе йаланах мухтавлă тăратăн, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

(*Çӳлĕ вырăн çине священникен ларма йурамасть, вăл çав вырăн çумне кăнтăрла йенне ларать*).

*Йурлакансем виç-святойлă йурă йурласа пĕтерсен діакон Патша алăкĕ патне пырать те, çапла калать:*

*Діакон:* Итлесе тăрар.

*Священник:* Пурсăра та канăçлăх пултăр.

*Вулакан:* Санăн сывлăшна та пултăр.

*Діакон:* Аслăлăх.

*Вара вулакан прокимен калать, Йурлакансем прокимена виç хут йурлаççĕ. Унтан діакон калать:*

Аслăлăх.

*Вулакан апостол вулать.*

*Апостол вулана вăхăтра діакон пĕтĕм тиркеве тĕтĕрет; апостол вуласа пĕтерсен,—*

*Священник:* Канăçлăх пултăр сана.

*Вулакан:* Санăн сывлăшна та пултăр.

*Діакон* Ăслăлăх.

*Вулакан:* Аллилуіа. *3 хут.*

*Вара йурлакансем* Аллилуіа *3 хут йурлаççĕ, священник ун тѣух çак кĕлле вулать:*

Ей етеме савакан Патша Тура, пирĕн ăша Хăна пĕлтерекен пĕтми çутăпа çутăлтар, пирĕн шухăшăмăрсене тасатса, Евангеліе мĕн вĕрентнине ăнлама пар; Хăнтан хăракан туса, ырă сăмахусене пирĕн ăша кÿрт, вара епир ÿт аскăнне пăрахса, Хăна йурăхлă ĕçсене ырă шухăшпа анѣах туса тăрса, хамăр ĕмĕре таса пурăнса ирттерер. Ей Христос Турă, Есĕ пирĕн ѣунсене, пирĕн ÿтĕмĕрсене çутатакан, Сана ĕмĕртен малтанхи Аçупа пĕрле, пурне те ѣĕрĕ тăвакан ѣăн таса ырă Сывлăшупа пĕрле аслăласа мухтатпăр, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех, амин

*Діакон тĕтĕрсе петерсен тĕтĕркĕтѣ выранне хурать унтан священник патне пырса пуçне тайса орар тытакан пÿрнисемпе священникрен Евангеліе илет те, çапла калать:*

*Діакон:* Святой (*йтане кала*) апостол çырнă Евангеліери сăмахсене вулама пилле, атте.

*Священник ана пиллесе калать:*

Евангеліе çыракан, аслă, мухтăвлă, святой (*йатне кала*) апостол кĕллипе Тура сана Хăйĕн савнă Ывăлин, пирĕн Іисус Христос Туррăмăрăн Евангелійĕне ырă вулама аслă хăват патăр.

*Діакон:* Амин.

*Вара Евангеліене Патша алакĕнтѣен çĕклесе тухать, амвон çинтѣе йалан тăракан çĕре кайса Евангеліене аналой çине хурать. аналой умне çурта лартаççĕ.*

*Священник престол умĕнтѣе халăх йенне çаврăнса çапла калать:*

Аслалăх. Ҫипер тăрса таса Евангеліене итлер.

Пурсăра та канăҫлăх пултăр.

*Йурлакан:* Санăн сывлăшна та пултăр.

*Діакон:* Іоанн (*йе урах*) ҫырнă таса Евангеліери самахсем.

*Йурлакан:* Мухтав Сана, ей Тура, мухтав Сана.

*Священник:* Итлесе тăрар.

*Евангеліе вуласа пĕтерсен, священник діакон йенне пиллесе калать:*

Сана, ырă хыпара пĕлтерекене, канăҫлăх пултăр.

*Йурлакан:* Мухтав Сана, ей Турă, мухтав Сана.

*Вара діакон таса Евангеліене священнике Патша алăкенҫен парать те, хăй вырăнне ектеніа калама тăрать, священник Евангеліене илсе престол ҫине хурать, Патша алăкне хупать.*

*Діакон вара ҫак ектеніана калать:*

Пурсăмăр та пĕтĕм ҫунтан-вартан, пĕтĕм ҫĕререн калар.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Ей пурне те тытса тăракан Турă, аттемĕрсенĕн Турри, Сана кĕл-тăватпăр, илтсе ҫырлах.

*Йурлакан:* Ей Тура, ҫырлах.

Ей Тура, Санăн ырăлăх нумай, ҫырлах пире, Сана кĕл-тăватпăр, илтсе ҫырлах.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах. *3 хут.*

Тата ҫăн тĕне тытса, сыхласа, пĕтĕм Россіана хăй ирĕкĕпе тытса тăракан Аслă Патшамăр Император Николай Александровичшăн кĕлтăвар: ăна патшалăхне лайăх тытса тăма патăр, хăватлăх, ырă пурăнăҫ, ырă кăмăл, сывлăх, ҫăлăнăҫ патăр, пуринҫен ытла Туррăмăр ăна пур ĕҫре те пулăшса, унăн ĕҫĕсене ăнтарса пытăр, хирĕҫ тăракан ташманĕсене пурне те ҫĕнтерсе, унăн ури айне тутăр.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах. *3 хут.*

*Священник хăй ашĕнҫе ҫунтан-вартан ҫак кĕлле вулать:*

Ей Туррӑмӑр, Туррӑмӑр, ҫак Хӑвӑн ҫурусем ҫунтан тархасласа кӗл-тунине хапӑл ил, Хӑван ырӑлӑху нумай тӑрӑх, пире ҫырлах, пире те, Хӑнтан пысӑк ырӑлӑх кӗтсе тӑракан мӗн пур халӑхна та Хӑвӑн тиветне антарса пар.

Тата унӑн ырӑ Арӑмӗ ҫӑн тӗне тытса, сыхласа тӑракан Императрица Александра Ѳеодоровнашӑн, унӑн ырӑ Амӑшӗ ҫӑн тӗне тытса сыхласа тӑракан Императрица Марiа Ѳеодоровнашӑн кӗл-тӑвар.

*Йурлакан*: Ей Турӑ, ҫырлах. *3 хут.*

Тата Патшанӑн хӑй вырӑнне патша пулас ывӑлӗ, ҫӑн тӗне тытса тӑракан Аслӑ Княҫ Цесаревич Алексiй Николаевичшӑн, Патшанӑн пур тӑванӗсемшӗн те кӗл-тӑвар.

*Йурлакан*: Ей Турӑ, ҫырлах. *3 хут.*

Тата ҫиркӳсене пӑхса тӑракан Святѣйшiй Синодшӑн, *(хула йатҫӗсене кала)* хулийӗн ырӑ ҫыннӑмӑр Преосвященнѣйшiй Епископ *(йатне кала)*, Христосшӑн тӑрӑшса пурӑнакан пур тӑванӑмӑрсемшӗн те кӗл-тӑвар.

*Йурлакан*: Ей Турӑ, ҫырлах. *3 хут.*

*Кунта священник антиминсӑн виҫ йенне сарать те, антиминсна престола туп-тӑвать.*

Тата Патшанӑн Христоса йуратса тӑракан пӗтӗм ҫарришӗн кӗл-тӑвар

*Йурлакан*: Ей Турӑ, ҫырлах. *3 хут.*

Тата хамӑр тӑванӑмӑрсемшӗн, священниксемшӗм, монах-священниксемшӗн, Христос ӗҫӗнҫе тӑракан пур тӑванӑмӑрсемшӗн те кӗл-тӑвар.

*Йурлакан*: Ей Турӑ, ҫырлах. *3 хут.*

Тата ӗмӗр асӑнма тивӗҫлӗ, ҫӑн тӗне тытса, сӑваплӑ пурӑнса вилнӗ святѣйшiй патрiархсемшӗн, ҫӑн тӗне тытса, сыхласа пурӑннӑ патшасемшӗн, ҫӑн тӗне тытса пурӑннӑ патша арӑмӗсемшӗн, ҫак таса ҫир-

кĕве тутарна сăвапла ҫынсемшĕн, ҫăн тĕнпе пурăнса вилнĕ пур аттемĕрсемшĕн, пур тăванăмăрсемшĕн, кунта пытарнисемшĕн, ытти ҫĕре пытарнисемшĕн пуриншĕн те кĕл-тăвар.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах. *3 хут.*

Тата ҫак таса ырă ҫиркĕве парне паракансемшĕн, ырăлăх тăвакансемшĕн, тăрăшакансемшĕн, ҫакăнта йурлакансемшĕн, Санран ырăлăх кĕтсе тăракан халăхшăн кĕл-тăвар.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах. *3 хут.*

*Священник:* Есĕ етеме хĕрхенекен, етеме савакан Турă. Сана—Ашшĕне,Ывăлне, Святой Сывлăшне аслăласа мухтатпăр, халĕ те, кирек хăҫан та, ĕмер емĕрех.

*Йурлакан:* Амин.

*Діакон:*

Тĕне кĕмеллисем, Турра кĕл-тăвăр.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Ей ĕненекенсем, тĕне кĕмеллисемшĕн кĕл-тăвар, Турă вĕсене ҫырлахтăр.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Вĕсене Хăйĕн ҫăн сăмахне пĕлтертĕр.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Вĕсене Евангеліенĕн тĕрĕслĕхне кăтарттăр.

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Вĕсене апостолсенҫен йулса пĕтĕм тĕнҫене саралнă таса ҫиркĕве хутшăнтартăр

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Ей Турă, Хăвăн ырăлăхупа вĕсене ҫăл, ҫырлах, вĕсен хутне кĕр. пăхса усра вĕсене

*Йурлакан:* Ей Турă, ҫырлах.

Тĕне кĕмеллисем, Турă умĕнҫе пуҫăрсене тайса тарăр.

*Йурлакан:* Сана, ей Турă.

*Священник тĕне кĕмеллисемшĕн ҫак кĕлле вулат:*